Паян – Тыр-пул уявĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

Муркаш район хаçачĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

86-87 (7403-7404) №№ * Шăмат кун, 2006 çулхи октябрĕн (юпа) 14-мĕшĕ * Хакĕ ирĕклĕ



**«Свобода» хуçалăхри Валерий Александрович Соловьевшăн кăçалхи вырма пĕрремĕш мар. Çулленех вăл ответлă тапхăрта комбайн штурвалĕ умне ларать, япăх мар кăтартусем тăвать. 17 çул ĕнтĕ.**

**Кăçал вăл пĕрремĕш хут «Дон-1500» комбайнпа ĕçлерĕ, 973 тонна тырă çапса тĕшĕлесе районти комбайнерсем хушшинче мала тухрĕ.**

**ХИСЕПЛĔ ЯЛ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

**Паян Тыр-пул уявне паллă тăватпăр. Уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ хыççăн пĕрле пуçтарăнса, çитĕнӳсене палăртатпăр, производствăра маттуррисене чыслатпăр. Кăçал çанталăк условийĕсем çĕр ĕçченĕшĕн хавхаланмаллах пулмарĕç пулин те, акса-лартса хăварнă ял хуçалăх культурисене йĕркеллех пухса илтĕр. Мĕн чухлĕ чăтăмлăх кирлĕ пулчĕ. Хăвăр ĕçĕре чун-чĕререн парăнни вара сире, йывăрлăхсене çĕнтерсе, палăртнă задачăсене пурнăçа кĕртме май пачĕ.**

**Тыр-пул уявне ял хуçалăх ĕçченĕсем япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ. Кăçалхи 9 уйăхра ял хуçалăх продукцине иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 15,4 процент чухлĕ ытларах туса илсе реализациленĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче те çитĕнӳсем çук мар. Аш-какай иртнĕ çулхи çак вăхăтринчен 9,2 процент ытларах туса илнĕ. Сĕт туса илессипе те малаллах каятпăр. Кашни ĕнерен вăтамран 7,5 процент нумайрах - 2983 килограмм сĕт сунă. “АПК аталантарасси” наци проекчĕ вара пире çак кăтартусене татах та пысăклатма майсем туса пачĕ.**

**Район аталанăвĕнче çавăн пекех уйрăм хушма хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсем те пĕлтерĕшлĕ вырăн йышăнаççĕ. Тавах сире, ял ĕçченĕсем, пархатарлă ĕçĕршĕн. Сирĕн пурин те кăçалхи ĕçсене тивĕçлĕ хак парса, çитес çулта тата та ăнăçлăрах вăй хумалла пултăрччĕ. Малалла та пĕр шухăшлăн, пĕр тĕллевлĕн ĕçлесчĕ.**

**Хаклă ял ĕçченĕсем! Сире Тыр-пул уявĕпе, Пукрав праçникĕпе ăшшăн саламлатăп. Çирĕп сывлăх, телей сунатăп. Çемйĕрсенче яланах килĕшӳпе тату пурнăç пултăр.**

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**



**Александр Ермогенович Анисимова «Ударник» хуçалăхра аван пĕлеççĕ. «УАЗ» автомашинăпа ĕçлет вăл. Вырма ĕçĕсем пуçлансан вара груз турттармалли автомашинăпа комбайнсем патĕнчен йĕтемсем çине тырă турттарнă çĕрте тăрăшать.**

**Кăçал вăл уйрăмах ăнăçуллă ĕçленĕ. Хиртен пĕтĕмпе 1106 тонна тырă турттарса тухнă, районти тырă турттаракан водительсем хушшинче çĕнтерӳçĕ пулса тăнă. Ахальтен мар ĕнтĕ вăл Чăваш Республикин Президенчĕн стипендине илме тивĕçнĕ.**

## Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ

**2006 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕ 473 №**

**Районти ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинчи 2006 çулхи 9 уйăхри экономика ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен**

**Район администрацийĕн пуçлăхĕн 2006 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнчи 109 № йышăнăвĕпе çирĕплетнĕ Экономика ăмăртăвĕ çинчен калакан положенипе тата районти ял тăрăхĕсем, предприятисемпе организацисем хушшинчи экономика ăмăртăвĕн итогĕсене пĕтĕмлетекен комисси решенийĕпе килĕшӳллĕн çапла йышăнатăп:**

**Районти ял хуçалăх предприятийĕсем хушшинчи 2006 çулхи 9 уйăхри экономика ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ тесе шутлас:**

**1 вырăн – “Свобода” ял хуçалăх производство кооперативĕ-племзавод;**

**2 вырăн – Ильич ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕ;**

**3 вырăн – “Ударник” сăнавлă производство хуçалăхĕ патшалăх унитарлă предприяти.**

**“Восток” ял хуçалăх производство кооперативĕ, “Герой” ял хуçалăх производство кооперативĕ лайăх ĕçленине палăртас.**

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ыран – Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМПЕ ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире професси уявĕпе саламлатăп!**

Çул-йĕр сечĕсене аталантармасăр паянхи обществăра май çук. Çак отрасль Чăваш Республикин пурнăç аталанăвĕнче питех те пысăк вырăн йышăнать. Эсир хăвăр хастар ĕçпе экономикăпа социаллă сферăна тухăçлă аталантарса пыма майсем туса паратăр. Çул-йĕр хуçалăх специалисчĕсен тăрăшулăхĕнчен республикăра пурăнакансен, водительсемпе пассажирсен кăмăлĕ мĕнле пуласси те килет. Эсир унчченхи пысăк производство потенциалне сыхласа хăварнă тата ăна ăнăçлă аталантарса пыратăр, çул-йĕр çинчи йĕркелĕхпе хăрушсăрлăха тивĕçтерме май паракан çĕнĕ технологисемпе активлă усă куратăр.

Çĕнĕ çулсем çынсен пурнăç условийĕсене палăрмаллах лайăхлатаççĕ, вăл хăтлăрах пулса тăрать. Çитес икĕ çул хушшинче пирĕн Раççей шайĕнчи историллĕ проблемăна татса памалла – Чăваш Республикинчи пур ялсене те асфальт çулсемпе çыхăнтармалла. Пирĕн тĕллев – республика территорийĕнче тĕнче стандарчĕсене тивĕçтерекен тĕслĕхлĕ транспорт инфраструктурине туса хурасси. Республикăшăн пысăк пĕлтерĕшлĕ çак задачăна эпир сирĕнпе пĕрле ăнăçлă татса парасса шанса тăратăп.

Сире ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем, ырлăх-сывлăх, ăнăçусем тата телей сунатăп!

**Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. ФЕДОРОВ.**

**ÇУЛ-ЙĔР ХУÇАЛĂХĔН ХИСЕПЛĔ ĔÇЧЕНĔСЕМ!**

Çулсене пурнăç артерийĕпе танлаштараççĕ. Çакă хăех çул кашни çын пурнăçĕнче мĕн тери пысăк пĕлтерĕшлине кăтартса парать. Çул-йĕр ыйтăвĕ пирĕн районта яланах малтан татса памалли ыйтусенчен пĕри пулнă. Чăваш Республикин Президенчĕн Н.В. Федоровăн “Чăваш Республикин автомобиль çулĕсене хăвăрт вĕçлес енĕпе пурнăçламалли ĕçсем” Указĕ вара çак ыйтăва икĕ çул хушшинче татса пама май парать. Çапла майпа пирĕн районти халиччен асфальт çул пулман 35 ял патне йĕркеллĕ çул пулĕ. Халĕ ку ĕç районта малалла пырать ĕнтĕ. Çулталăк вĕçлениччен 9 объекта хута яма палăртнă. Май пур таран ытларах çĕрте çĕре хăпартса хăвармалла – çакăн пек пирĕн тĕллевĕмĕр. 2007-2008 çулсенче пирĕн районта çул тăвассипе 8 подряд организацийĕ ĕçлĕ.

Çул тăвакансен, юсакансемпе пăхса тăракансен ĕçĕ пархатарлă та пысăк пĕлтерĕшлĕ. Эсир яланах çул такăр та тикĕс, усă пултăр тесе, хăвăртан килнине йăлтах тăватăр. Тавах сире çакăншăн. Эсир малашне те хăвăрăн тивĕçĕре чун-чĕре хушнă пек пурнăçласса шанатăп.

Хисеплĕ ĕçченсем, сире Çул-йĕр хуçалăх ĕçченĕсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп. Пурсăра та çăмăл мар ĕçĕрте ăнăçу, çитĕнӳ тума ырлăх-сывлăх сунатăп. Çулăр та, кун-çулăр та телейлĕ пултăр.

**Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Район администрацийĕн пуçлăхĕн йышăнăвĕ

**2006 çулхи октябрĕн 10-мĕшĕ 471 №**

**2006 çулхи вырмара ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕн итогĕсем çинчен**

1. 2006 çулхи вырмара ял хуçалăх предприятийĕсенчи механизаторсем хушшинче ирттернĕ экономика ăмăртăвĕнче çĕнтернĕ тесе шутлас, район администрацийĕн дипломне, хаклă парне парас

**Комбайнсен экипажĕсем хушшинче:**

-“Свобода” ял хуçалăх производство кооперативĕ-ăратлăх енĕпе ĕçлекен заводри **Валерий Александрович СОЛОВЬЕВ** комбайн экипажĕ **пĕрремĕш вырăна** тухнă, ДОН-1500 маркăллă комбайнпа 486,3 гектар çинчен 973 тонна тыр-пул çапса тĕшĕленĕ. 1 степеньлĕ диплом, “Вырма-2006” чемпион хăйăвне тата 1200 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

-чикĕллĕ яваплăхлă “Рассвет” агрофирма обществăри **Анатолий Николаевич ЕРМАКОВ** комбайн экипажĕ **иккĕмĕш вырăна** тухнă, “Енисей–1200” маркăллă комбайнпа 418 гектар çинчен 627,6 тонна тыр-пул çапса тĕшĕленĕ. 2 степеньлĕ диплом тата 1000 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

-“Герой” ял хуçалăх производство кооперативĕнчи **Юрий Николаевич ЕВДОКИМОВ** комбайн экипажĕ **виççĕмĕш вырăна** тухнă, “Нива-СК-5” маркăллă комбайнпа 186 гектар çинчен 390,5 тонна тыр-пул çапса тĕшĕленĕ. 3 степеньлĕ диплом тата 800 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

**Комбайнсем патĕнчен тырă турттарнă водительсем хушшинче:**

-“Ударник” сăнавлă производство хуçалăхĕ патшалăх унитарлă предприятири **Александр Ермогенович АНИСИМОВ** водитель **пĕрремĕш вырăна** тухнă, 1106 тонна тырă турттарнă. 1 степеньлĕ диплом, “Чи лайăх водитель” хăйăвне тата 600 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

-“Оринино” ял хуçалăх производство кооперативĕнчи **Иван Алексеевич ЕРШОВ** водитель **иккĕмĕш вырăна** тухнă, 696 тонна тырă турттарнă. 2 степеньлĕ диплом тата 500 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

-Чапаев ячĕпе хисепленекен ял хуçалăх производство кооперативĕнчи **Илья Серафимович ВАСИЛЬЕВ** водитель **виççĕмĕш вырăна** тухнă, 690 тонна тырă турттарнă. 3 степеньлĕ диплом тата 400 тенкĕлĕх хаклă парне парас.

**Район администрацийĕн пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.**

## Ял хуçалăх ĕçĕсене пĕтĕмлетсе

# Ял çынни тăрăшнăран кĕрхи пӳлме чухăн мар

**Ял хуçалăхĕ пирĕн район экономикин тĕп никĕсĕ пулса тăрать. Агропромышленность комплексĕнче хастар та маттур, çĕр ĕçне чунтан парăннă тата юратакан çĕршер çын вăй хуни района тивеçлĕ шайрах тытăнса тăма май парать.**

Хăйсен професси уявне ял хуçалăх ĕçченĕсем кăçал япăх мар кăтартусемпе кĕтсе илчĕç. Пĕрчĕллĕ тата пăрça йышши культурăсене пĕтĕмпе 28 пин тонна пухса кĕртнĕ, кашни гектартан вăтамран бункер виçипе 17 центнера яхăн тухăç илчĕç.

Паянхи наука çитĕнĕвĕсемпе усă куракан, агротехника ыйтăвĕсене пăхăнса ĕçлекен, пысăк репродукциллĕ çĕнĕ сортсемпе усă куракан хуçалăхсем çанталăкăн кирек епле условийĕсенче те пысăк тухăç илме пултарнине кăçал та кăтартса пачĕç.

Чи пысăк тухăç илекен хуçалăх кăçал сăнавлă производство “Ударник” хуçалăхĕ пулчĕ (ертӳçи Платон Павлович Давыдов, тĕп агрономĕ Григорий Аркадьевич Павлов). Кашни гектартан кăçал çак хуçалăх 26 центнер тĕш тырă пухса кĕртрĕ. Çавăн пекех Ильич яч. хис. (25 ц.), “Восток” (21 ц.), “Герой” (21 ц.), Чапаев яч. хис. (21 ц.) хуçалăхсенче те япăх мар тыр-пул çитĕнтерсе кĕртрĕç.

Пысăк репродукциллĕ сортсем уйрăмах пысăк тухăç пани кăçалхи условисенче уйрăмах палăрчĕ. Сăмахран, “Ударник” хуçалăхри Вăрманкасси уйрăмĕнче 110 гектар çинче ӳстернĕ “Биос-1” сортлă урпа кашни гектартан 47-шер центнер тухăç пачĕ. “Свобода” хуçалăхра 30 гектар çинчи “Московская – 39” сортлă кĕрхи тулăна кашни гектартан 40-шер центнер пухса кĕртнĕ. “Герой” хуçалăхра 30 гектар çинчи “Биос-1” сортлă урпа кашни гектартан 39-шар центнер тухăç пачĕ.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, тыр-пул пухса кĕртес ĕç комбайнерсем çине тиенет. Хăйсен тивĕçĕсене пурнăçлассипе кăçалхи вырмара уйрăмах лайăх ĕçленĕ комбайнерсене палăртса хăварма кăмăллă. Акă вĕсем: “Свобода” хуçалăхри Валерий Соловьев (973 тонна çапса тĕшĕленĕ), Алексей Алексеев (862 тонна), “Ударник” хуçалăхри Алексей Степанов (794 тонна), “Чемеево” хуçалăхри Геннадий Машинин (611 тонна), ООО “Рассвет” хуçалăхри Анатолий Ермаков (627 тонна), Ильич яч. хисепленекен хуçалăхри Юрий Егоров (464 тонна), “Герой” хуçалăхри Юрий Евдокимов (390 тонна) тата ытти те. Питĕ пысăк тав вĕсене ĕçри тăрăшулăхшăн, маттурлăхшăн.

Вырма техники кивелсе çитни, вăл час-часах çĕмĕрĕлни тыр-пула хăвăрт пухса тирпейлеме йывăрлăхсем кăларса тăратрĕç. Çав вăхăтрах кӳршĕлĕх туйăмĕ, йывăр самантра пулăшу пама хатĕр пулни кăçалхи ĕççинче уйрăмах палăрчĕ. Хăйсен хуçалăхĕсенче ĕçе вĕçленĕ хыççăн “Оринино”, “Герой”, “Волга”, К. Иванов ячĕпе хисепленекен тата Ямангеев, Саптеев фермер хуçалăхĕсен комбайнĕсем кӳршĕллĕ хуçалăхсене тыр-пул пуçтарса кĕртме пулăшрĕç, тивĕçлĕ тӳпе хыврĕç. Вĕсене паян чĕререн тухакан тав сăмахĕсем калатпăр.

Муркаш районĕ республика шайĕнче çĕр улми туса илессипе яланах палăрса тăнă. Кăçал 1270 гектар çинчен “иккĕмĕш çăкăра” 19 пин те 600 тонна пуçтарса илтĕмĕр. Районĕпе вăтам тухăç 155 центнерпа танлашрĕ. “Оринино”, “Ударник”, Ильич яч.хисепленекен хуçалăхсем кăçал çĕр улми туса илессипе уйрăмах ăнăçлă ĕçлерĕç. Кашни гектартан 200-шер центнер ытла тухăç илчĕç.

“Иккĕмĕш çăкăра” вăхăтра тата тирпейлĕ пухса кĕртес ĕçре хуçалăхсене пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан шкулсен коллективĕсем пысăк пулăшу пачĕç. Çакăншăн вĕсен ертӳçисене, вĕрентекенсемпе вĕренекенсене чун-чĕререн тухакан тав сăмахĕсем кăна калас килет.

**(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).**